Ырă ёçсен çулталăкёнче

Ватта сума сăвакан, хăй те ырă куракан

Аслă ăрури çынсен ăслă канашёсемсёр, пурнăç опычёсёр пёр ертӳçё те малалла каяйман. Çемье пурнăçёнче йăх-несёлне пёлмен çынна пушшех те çăмăл мар. Ача-пăчашăн вара аслашшё-асламăшё е кукашшё-кукашшё юнашар пулни – чăнчăн савăнăç. Темле асамлă çыхăну, иртнё кунсемпе малашлăхăн пёрлёхё курăнать çак юнашарлăхра.

Районти историпе краеведени музейё çитёнекен ăрава воспитани парас ёçре вёсене аслă ăру çыннисен тёнче курăвёпе, ёçё-хёлёпе паллаштарассине тёп вырăна хурать. Муркашри пётёмёшле пёлӳ паракан вăтам шкулта та ку ырă йăларан пăрăнмаççё. Акă юпа уйăхён 9-мёшёпе 10-мёшёсенче, музейпа шкул хушшинче йышăннă пёрлехи планпа килёшӳллён, икё илемлё мероприяти иртрё. Кёçнерни кун «Чи пултаруллă асанне тата чи пултаруллă мăнук» конкурс иртрё. Улттăмёш класра вёренекенсемпе вёсен асламăшёсем пуçтарăнчёç унта. Пёр чёлхе тупма пёлни те, юрă-сăвă та, ал ăсталăхё те кирлё пулчё кунта. Асаннесем çак енсемпе палăрчёç: юмах каласа парассипе Зинаида Николаевна Кадыкова, ваттисен сăмахёсене пуçтарассипе Феодосия Степановна Воробьева, Галина Титовна Дмитриева вара сăпка юрри юрлассипе, тутлă апат-çимёç пёçерес енёпе Светлана Федоровна Павлова мала тухрёç, Клера Иннокентьевна Романова Марина мăнукёпе такмаксем ăста юрларё, чи лайăх ал ёç ăсти ятне Зоя Павловна Скворцова çёнсе илчё, Раиса Вячеславовна Ермолаева мăнукне чи илемлё бантик çыхса яма пултарчё. «Чи пултаруллă асанне» ята Чуманкасси ял тăрăхёнчи Зинаида Николаевна Кадыкова тивёçрё. «Чи пултаруллă мăнук» тесе вара 6-мёш «а» класра вёренекен Валерия Сидюшкинана палăртрёç.

Эрне кун районти историпе краеведени музейёнче «Внук и дед живут без бед» - «Хăрушă мар нимён те, пултăр çумра асатте» ятлă конкурс иртрё. Аслашшёсемпе 4–6 классенче вёренекен мăнукёсем хутшăнчёç унта. Вёсем: Иван Алексеевич Тимофеев Кирилл мăнукёпе, Альберт Федорович Романов Алеша мăнукёпе, Валерий Афанасьевич Бычков Женя мăнукёпе, Александр Михайлович Налимов Артем мăнукёпе, Анатолий Григорьевич Григорьев Артем мăнукёпе, Владимир Петрович Чернов Коля мăнукёпе, Иосиф Иванович Пушкин Саша мăнукёпе.

Арçын ачасем хăйсен аслă юлташё, аслашшё çинчен ятарлă альбом хатёрлерёç, ырă та пултаруллă çын пулма мёнле «рецепт» кирлине те пёрле шухăшларёç аслипе кёçённи, пăта çапма пёлни, чăваш халăхён музыка инструменчёсемпе ёç хатёрёсене пёлни те аван курăнчё тёрлё конкурссенче. Кулăшла самантсене аса илни, юрă-сăвă илемлетрёç конкурса. Пёрремёш вырăна Валерий Афанасьевич Бычковпа Женя мăнукё çёнсе илчёç, иккёмёш вырăнта – Альберт Федорович Романовпа Алеша мăнукё, виççёмёш вырăна вара Анатолий Григорьевич Григорьев Артем мăнукёпе çёнсе илчёç. Уяв питё лайăх иртрё. Унпа пурте кăмăллă пулчёç.

Е. РОМАНОВА,
районти историпе краеведени музейён ертӳçи.

Сăн ӳкерчёкре: акă вёсем – конкурссен çёнтерӳçисем.

Редакци хăни

Муркашсене чăваш юррисемпе савăнтарё

Эстрадăра Владимир Леонтьевăн ячё пёрремёш хут 1999 çулта илтённё. Вăл Петр Романов композиторăн концертёнче «Ах, пёлменçке хёр чунне» юрра шăрантарнă. Çак çулах «Тапăртатса тăрать тур лаши» чăваш халăх юррипе клип ӳкернё. 2000 çулта çамрăк хăй вăйёпе концерт лартнă.

Красноармейски районёнчи Чиркӳллё Карай каччин юррисем куракансен кăмăлне каяççё. Çамрăксене валли вăл юрату юррисем шăрантарать. Аслăрах çултисене пурнăç, шăпа пирки шухăша ярать. Халăх юррисене вара пурте кăмăлланине палăртать. Çи-пуçне час-часах улăштарать (гардеробёнче 40 костюм) юрăç. Вăл йёркеленё концертсем ташăсемпе иртеççё.



Владимир Леонтьев концертсемпе районсене çеç мар, аякри чăвашсем патне те тăтăшах тухса çӳрет. Мускавра, Тюменьре, Пушкăртстанра, Чёмпёрте, Тутарстанра куракансене савăнтарнă вăл. Аякри ентешсем чăваш халăх юрисене юратнине палăртать.

Владимир редакцие кёрсен Муркаша пёрремёш хут концертпа килессине пёлтерчё. Вăл хăйён пултарулăхёпе паллашма шкул ачисене те, аслисене те, сумлă ватăсене те чёнет.

Владимир Леонтьевăн концертё Муркашри Культура çуртёнче октябрён 23-мёшёнче 18 сехет те 30 минутра пуçланать. Унăн концертне паллă чăваш юрăçисем тата Шупашкарти «Голливуд» ташă ушкăнё хутшăнаççё. Билет хакё – 100 тенкё. Ыйтса пёлмелли телефон: 2-16-30.

Сăн ӳкерчёкре: Владимир Леонтьев юрăç.

А. ИВАНОВ.

Редакци почтинчен

Раççей Патшалăх Думинче паян эрех сутмалли йёркене улшăнусем кёртес ыйтăва сӳтсе яваççё. Тёслёхрен, шкулсем çывăхёнче вырнаçнă магазинсенче эрех-сăра сутассине пăрахăçлама палăртаççё. Çавна май редакци почтинчи икё çырупа паллаштарас терёмёр.

Патакпа хăваламалла

Муркаш урамёсен уйрăлми пайё ӳсёр çынсем пулса тăчёç. Столовăйпе кафесем таврашёнче мухмăрлисем кунёпех хёвёшеççё. Вёсене апат çиме кёрес те килмест.

Столовăйне буфет витёр иртмелле. Кунта вара яланах мухмăр чёртес текенсем сулланаççё. Апатне çиме чек çаптарма та вёсемпе пёр черетрех тăмалла. Çав мухмăр-сухмăрсемпех пёр залра апатланмалла.

Çёр грамм сутса тунă тупăшё апат çитернинчен ытларахши? Кăна райпо экономисчёсем шутласа пăхнă пулё-ха.

Муркашра совет саманинче хальхи пасар вырăнёнче сăра барё вырнаçнăччё. Мухмăрлисемшён кунта çăтмах пулнă. Йёркеллё çынсем кунта, паллах, ура ярса та пусман.

Ёçсе çын ятне янисене урă çул çине тăратма çук. Вёсене милици ёçченёсен столовăйсемпе кафесенчен патакпа хăваламалла. Обществăлла вырăнта çыннăн ӳсёр çӳреме юрамасть вёт-ха!

Муркашра çеç мар, Мăн Сёнтёрте те çакăн пек ӳкерчёк.

Çамрăксем усал тёслёх ан илччёр тесен ёçкёçсемпе кёрешмеллех. Ӳсёр çынсем урам хуçи ан пулччăр. Вёсем намăс-симёс мённе пёлмеççё. Çавăнпа алкашсене патакпа хăваламалли çеç юлать. Е Муркаш ялён хёрринче сăра барё уçса памалла.

А. ИВАНОВА.

Шкул çывăхёнче эрех сутмалла мар

Нумайранпа пулманччё Ваçкасси ялёнче. Çак уйăхра пёлёш патне хăнана кайсан тёлёнмеллипех тёлёнсе килтём. Кунти магазин таврашёнче мён тёрлё пушă кёленче йăваланмасть пулё! Сăра кёленчисем, эрех кёленчисем. Шупашкар завочё кăларнисем, Етёрне завочё юхтарнисем, Сёнтёрвăрри завочё ăсталанисем... Ӳсёрсем хирёçни-вăрçни те пулать иккен.

Магазинпа юнашарах - столовăй, хуçалăх правленийё, автопарк. Никольский ячёпе хисепленекен шкул та çывăхрах вырнаçнă.

Ваçкасси шкулёнче эрех сутассине пăрахăçлама вăхăт. Мёншён? Шкула каякан ачасем кашни кун кунти йёркесёрлёхе курса тăраççё. Кунран-кун! Апла пулсан вёсенчен сывă ăру çитёнессе кётме пулать-и?

П. ИВАНОВСКИЙ.

Пёлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:021001:448, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:021001, площадью 5800 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:280401:99, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части квартала 21:17:280401, площадью 5700 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:110301:109, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:110301, площадью 6195 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

МИР окон и дверей ☎29-80-60

ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя
Чувашии теперь...
в МОРГАУШАХ
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
8-927-669-80-60

Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.

Примем на работу сметчика-проектировщика, хорошо владеющего компьютером, бухгалтера со знанием программ 1-С «Бухгалтерия», водителя со своим грузовым автомобилем. Тел.: 8-903-345-75-76.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.
Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 1-13.

Индивидуальному предпринимателю Вязову Андрею Николаевичу требуется маляр мебельного производства. Зарплата высокая. Звонить по тел.: 2-25-74 с 8.00 до 17.00.

Хушма хуçалăхран 7 уйăхри тиха сутатпăр.
Тел.: 8-919-650-13-23. 3-4.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер.
Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 5-5.

Загружаю, перевезу, разгружаю. Кран - 2,8 т., борт – 5 т. Продаю: кирпич любой, блоки, пеноблоки, кольца колодезные, шифер, цемент. Тел.: 8-903-357-46-75. 7-7.

Куплю корову, бычка, телку. Тел.: 8-905-342-39-43.

Суворов ячёпе хисепленекен хуçалăх халăха урпа килограмне 6 тенкёпе сутать. Кирлисене хуçалăх транспортёпе турттарса пама пултарать. 1-2.

Халăхран лайăх хакпа ёне, тына, вăкăр ашăн тата чёрё виçепе туянатпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 1-4.

Утерянный аттестат о среднем образовании А 6224957, выданный Моргаушской средней школой в 2000 году на имя Приемовой Татьяны Викторовны, считать недействительным.

Январь уйăхёнче пёрремёш пăруламалли хёрлё тёслё ёне тата тăватă уйăхри хёрлё тёслё тынашка усрама сутатпăр. Тел.: 8-937-374-03-42, 8-905-027-88-40, 2-24-96.

Требуются продавцы. Тел.: 8-903-379-14-78.

Продаются металлические гаражи различных размеров с доставкой и установкой в пределах района. Цена от 18 000 до 20 000 рублей. Тел.: 8-927-850-07-20. 1-2.

ВНИМАНИЕ!!!

Очень низкие цены на широкий ассортимент бытовой техники и сотовых телефонов!
– Холодильники и морозильники;
– стиральные машины;
– DVD-плееры и домашние кинотеатры;
– микроволновые печи и пылесосы;
– телевизоры, ЖК телевизоры;
– сотовые телефоны (на месте подключение на операторы связи: Билайн, МТС, Мегафон).
При вашем желании можно купить товары в КРЕДИТ.
Обращаться в салон-магазин «СИМПАТИЯ» (в здании Моргаушского рынка).
Контактный телефон: 2-10-80.

Моргаушская районная газета «Çёнтерӳ ялавё»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 10.10.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.